25-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1942 ИЮЛЬ 18 ШАМАТКУН 166(6101) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕнĕ тырра йышăнма тĕплĕн хатĕрленер

Партипе правительство Хатĕрлев ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тырă склачĕсем тăвас ĕç кая юлса пынине пĕтерме, тырпула йышăнма пуçличчен 10 кун маларах элеваторсемпе хатĕрлев пункчĕсене пĕтĕмĕшпех юсама хушнă.

Фронта пулăшас хĕрӳллĕ кăмăлпа пурăнакан патриотсем — колхозниксем малтан çапнă тырра итем çинченех государствăна леçсе пама шутлаççĕ. Акнă çĕр лаптăкĕ ӳснĕ май, кăçал хатĕрлев органĕсен пĕлтĕрхинчен чылай ытларах тырă йышăнма лекет. Çавăнпа та колхозсем государствăна паракан тырра лайăх сыхласа усрас тесен, тырă хумалли складсемпе амбарсене малтанах тĕплĕн хатĕрлемелле. Кунта пысăк типтерлĕхпе йĕркелĕх кирлĕ.

Тырпула пухса кĕртме тытăнас кунсем çывхарсах килеççĕ. Вăхăт кĕскелет. Анчах çĕнĕ тырра йышăнма хатĕрленес тĕлĕшпе республикăн районĕсенче тумалли ĕçсем нумай-ха.

Çапла Вăрнар районĕнчи Заготзерно пункчĕн склачĕсенчен паянхи куна пĕрне çеç хатĕрленĕ, тепĕр икĕ склада юсама тытăннă та пĕтереймен, ыттисем патне вара пачах та алă пыман. Чылай складсен тăррисемпе çиййĕсем шăтăк, шыв каять. Заготзерно директорĕ Клибышев юлташ складсен çиййĕсене витмелли турпаса Шăхасанпа Çĕмĕрле районĕсенчен турттарса килессине шанса ларнă. Вăрнар районĕнчех вăрман нумай пулсан та, ăна вырăнта тăвас ĕçе организацилемен.

Канашри тырпул хатĕрлев пункчĕ те çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр мар. Юсама тивĕçлĕ складсенчен кунта 4-шне çеç юсанă. Складсем патне пымалли çулсем начар. Вĕсене юсас ĕçе Заготзерно директорĕ Буткевич юлташ организацилемен. Калас пулать: Канашри хатĕрлев пункчĕ республикăра чи пысăк пунктсенчен пĕри пулса тăрать, кунта тырă уйрăмах нумай йышăнма лекет. Çавăнпа та ĕнтĕ хатĕрленессе те тĕплĕн хатĕрленмелле.

Çĕнĕ тырра йышăнма Пăрачкав, Кувакино, Вăрмар пункчĕсем те начар хатĕрленеççĕ.

Складсемпе амбарсене, зерносушилкăсене пирĕн халех юсаса дезинфекцилесе ĕлкĕртмелле. Складсем тумалли тата юсамалли материалсене аякра шыраса çӳреме кирлĕ мар, вĕсене вырăнтах тупма тăрăшас пулать. Дезинфекци тăвас ĕç çине иртнĕ çулсенче çиелтен пăхнисем пулнă. Çавăн пирки хăшпĕр складсенче тырра сиенлекен кăпшанкăсем ĕрчеме тытăннă. Кăçал дезинфекци ĕçне пур çĕрте те тимлĕн туса ирттермелле. Складсене çулла çумăр шывĕ анассинчен, хĕлле юр кĕрессинчен тĕплĕн питĕрмелле.

Сушилкăсем туса хатĕрлес ĕçре çанталăк типĕ пулассине шанса лармалла кирлĕ мар. Çанталăк йĕпек мĕнле пулсан та хатĕрлев пункчĕн, çавăн пекех колхозсен те сушилкăсем хатĕр пулма тивĕçлĕ. Çак ĕç çине халĕ çиелтен пăхни пире кайран пысăк сиен кӳме пултарать. Сушилкăсем валли, партипе правительство кăтартса панă тăрăх, тырă йышăнма пуçличчен малтан вутă пĕр уйăхлăх запас хатĕрлесе хумалла.

Хăшпĕр çĕрте тырă склачĕсем патĕнче пушартан сыхланас ĕçе япăхтарни сисĕнет. Ку вăл вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах юрăхсăр япала. Государствăн пысăк та паха пуянлăхне — тăван çĕршывпа фронтшăн çавтери кирлĕ тырпула пирĕн пур инкек-синкексенчен те упрамалла, складсемпе амбарсем патĕнче пушартан сыхланас ĕçе лайăх йĕркелемелле, яланах çирĕп хурал тытмалла.

Тырă йышăннă çĕрте нимĕнле чăрмав та ан пултăр тесен хатĕрлев пункчĕсем патне пымалли çулсемпе вырăнсене лайăх юсамалла, çавăн пекех тырă йышăннă çĕрте кирлĕ инвентарьсене те тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. Складсемпе амбарсем патĕнче веялкăсемпе сортировкăсем, виçмелли тарасасем, тырă лавĕсене çумăртан сыхлама лупасайсем пулмалла. Тырă пахалăхне тĕрĕслемелли лабораторисене те лайăх йĕркелемелле. Тырă пама пынă колхозник е единоличник нимĕншĕн те ӳпкелешме ан пултартăр.

Районсенчи партипе совет организацийĕсен хатĕрлев органĕсене çĕнĕ тырра йышăнма хатĕрленес ĕçре куллен тĕрĕслесе, пулăшса пырас пулать. Тырă йышăннă çĕрте вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа йĕркелĕх пулма тивĕçлĕ.

Аш-какай памалли обязательствăна тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Чылай колхозсемпе колхозниксем кăçал государствăна аш-какай памалли обязательствăна ытлашшипех тултарчĕç. Ку шута Мăлгешкинĕри «Молодая сила», Тăвайри «Вперед» колхозсем те кĕреççĕ. Тугаçри «Комбайн» колхозăн плана тăрăх 23,24 центнер памалла, вăл 22,99 центнер панă.

Колхозниксенчен уйрăмах Пояндайкино, Магарино, Турхан тата Вырăс Улхаш ялсовечĕсем малта пыраççĕ. Ку ялсовечĕсенчи колхозниксем аш-какай памалли çулталăкри плана çитес кунсенчех тултараççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 40 яхăн танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, горючи тултарнă 8 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрсе тăкнă, пĕр танкера путарнă тата хуралра çӳрекен карапа сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити тата утлă çарăн пĕр эскадронне саппаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç хăюллăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Уйрăм участоксенче çапăçури пуçарулăх совет чаçĕсен аллине куçнă, гитлеровецсен оборонăна куçма тивнĕ. Пирĕн пĕр часть, малалла куçса пырса, противникăн пирĕн танксене хирĕç тунă вăйлă оборонине тĕл пулнă. Пирĕн боецсем, нимĕçсене хăвăрттăн та вăйлăн пырса çапса, тăшманăн оборонин малти линине татса кĕнĕ тата çавăн чухне тăшманăн 100 ытла противотанковăй тупшине пĕтерсе тăкнă. Çакăн хыççăн пирĕн чаçсем нимĕçсен оборонин иккĕмĕш рубежне татса кĕнĕ. Пирĕн тепĕр часть халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 7 танкне, 22 орудине, бронемашинине, грузсем турттарса пыракан 14 автомашинине, пулеметсен 10 точкине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр батальона ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра гитлеровецсем пĕр батальон чухлĕ вăйпа пирĕн çирĕплетнĕ рубежсем çине наступлени пуçласа янă пулнă. Пирĕн гвардеецсем, артиллериpен, минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсен батальонне çапса салатнă. Темиçе вуншар гитлеровец çеç тарса çăлăнса юлма пултарнă.

* * *

Миллеровăран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырăнта пирĕн войскăсем çапăçусем туса пырса çĕнĕ позицисем çине чакнă. Нимĕçсен фашистла войскисен йышлă вăйĕсене хирĕç татти-сыпписĕр йывăр çапăçусем туса пырса, пирĕн чаçсем нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пирĕн пĕр чаçри боецсем 3 кун хушшинче хаяр çапăçусенче 4.000 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 35 танкне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн авиаци, хăюллăн вĕçсе пырса тапăнса, наступлени туса пыракан гитлерла войскăсен салтакĕсемпе офицерĕсене питĕ нумай пĕтерет.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн артиллеристсем минометсенчен персе тата разведка тăвакан группăсем çапăçнипе пула пĕр кун хушшинче нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн боецсем халăх пурăнакан пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă. Противникăн 3 танк тата 250 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Воентехник Иванко юлташăн бригади çапăçу хирĕнчи условисенче 50 сехет хушши пĕр канмасăр ĕçлесе, 4 танка срокченех юсанă. Çав юсанă танксенчен пĕринпе кĕçĕн лейтенант Фролов юлташăн экипажĕ малтанхи çапăçурах нимĕçсен 3 танкне тата пĕр противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă.

Снайпер Семен Номоконов трехлинейнăй винтовкăран отлично перет. 1941 çулти ноябрь уйăхĕнче пуçласа вăл 222 гитлеровеца вĕлернĕ. Унăн ученикĕ красноармеец Курылов 98 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрядĕнчи çынсен пĕр ушкăнĕ шоссе çулĕ çинче засада тунă та противникăн автоколонни çине гранатăсем нумай ывăтнă. Гитлеровецсем хушшинче пăтрашу пуçланса кайнипе усă курса, партизансем нимĕçсен горючи тултарнă тата боеприпассем тиенĕ 5 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 35 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 82-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 166-мĕш полкран тыткăна илнĕ салтак Вильгельм М. çапла каласа панă: «Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 3-мĕш батальонра 250 çын ытла вилнĕ, çав шутрах батальон командирĕ майор Бозе те вилнĕ. Питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ пирки командовани обозри салтаксемпе ытти стройра пулма юрăхсăр салтаксене те çапăçăва кĕрте-кĕрте ярать. Эпĕ пĕрмаях ездовой пулсаччĕ. Июль уйăхĕн пуçламăшĕнче мана стрелок пулма куçарчĕç те малти позицисем çине ячĕç».

* * *

Орел облаçĕнчи Алешок ялне нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем пĕтĕмĕшпех çаратса, çунтарса янă. Пурăнмалли 97 çурт тата колхозăн обществăллă çурчĕсем пурте çунса кайнă. Хресченсенчен нумайăшне гитлеровецсем асаплантарса тата персе вĕлернĕ. Антон Иванович Казаков колхозникăн килне вăйпах кĕрсе кайса, палачсем малтан унăн 5 ачине персе вĕлернĕ, ун хыççăн арăмне тата хăйне те персе вĕлернĕ. 17 çулхи хĕртен Мария Патанчиковăран гитлерла тискер кайăксем ирсĕррĕн мăшкăлланă, унтан ăна персе вĕлернĕ.

* * *

Германире хими промышленноçĕнчен юлакан кирлĕ мар ăпăр-тапăрсемпе çăнăх вырăнне анлăн усă кураççĕ. Çăкăр пĕçерне чухне çăнăх ăшне çавнашкал япалана 50 процентран кая мар хутăштараççĕ. Çăкăр вырăнне пĕçерсе кăларакан çавнашкал япалана çинĕ хыççăн вара вар-хырăм чирĕсем пуçланаççĕ.

Июлĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Июлĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем ĕлĕкхи пекех вăйлăн пулса пыраççĕ. Противник малалла куçма темиçе хут та кăтартланса пăхнисем ăнăçуллă пулман. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен виллисем купи-купипе тата нимĕçсен çунса кайнă танкĕсем вуншарăн выртса юлнă. Пĕр участокра тăшман пехотин пĕр полкĕ пирĕн чаçа атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене çывăхах янă, унтан минометсенчен, пулеметсенчен тата винтовкăсенчен пеме тытăннă. Хăйĕн 800 салтакĕпе офицерне ытла çухатсан, противник каялла чакнă. Пирĕн танксем, нимĕçсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕнĕ те артиллерин 2 батарейине, 7 станковăй пулемет, 3 бронемашина тата 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет автоматчикĕсен отрячĕ, противникăн çирĕплетнĕ рубежĕсен районне татса кĕрсе кайса, унта нимĕçсен сехрине хăпартнă. Çав вăхăт тĕлне пырса çитнĕ пирĕн танкистсемпе пехотинецсем меллĕ позицисем йышăнса илнĕ. Вăл çапăçура противникăн 5 танк тата 600 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* * *

Миллеровăран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырăнта вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн войскăсем противникăн йышларах вăйĕсем хĕснипе каялла чакса пырса, нимĕçсене çурмаçул çинчи рубежсенче хирĕç çапса халран яраççĕ, вĕсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пĕр участокра пирĕн танкистсемпе пехотинецсем противникăн мала татса кĕнĕ чаçне çапса аркатнă. Нимĕçсен 11 танкне тата 1.800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем противникăн шыв урлă каçмалли вырăнта пухăнса тăнă пехотипе танкĕсем çине пенĕ. 14 танка çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ тата 600 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен чаçсем икĕ кун хушшинче 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Артиллерирен персе, тăшманăн 3 дзотне тата наблюдательнăй пунктне ишнĕ, пĕр аэростата персе ӳкернĕ тата противникăн артиллерийĕпе миномечĕсен темиçе батарейине пусарса лартнă. Самолетсем çинчен бомбăсем пăрахнипе пула финсен пĕр портĕнче çĕмĕрĕлнисем пулнă тата пушарсем тухнă. Çапăçу пынă май çынсене тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи партизансен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ çĕрле халăх пурăнакан пункт çине, нимĕçсем йышăнса тăракан çĕр çине, пырса тапăннă. Партизансем чаcовойсене пĕр сас-чĕвĕсĕр вĕлерсе пĕтернĕ те гитлеровецсем çывăрнă çуртсене гранатăсем ывăтнă. Совет патриочĕсем 60 оккупанта ытла вĕлернĕ, 2 танка, 8 автомашинăна тата боеприпассен складне çунтарса янă.

* * *

Матузовка ялĕнче (Украинăра) гитлерла çынвĕлеренсем калама çук пысăк преступлени тунă. Нимĕçсен çар влаçĕсем хресченсене икĕ кун хушшинче 2.000 пăт тырă тата 100 пăт какай пама хушнă. Хресченсем çапла каланă: эпир халь хамăр та выçă ларатпăр, мĕншĕн тесессĕн нимĕç салтакĕсем пире нимĕн юлмиччен çаратрĕç, тенĕ. Виççĕмĕш кунне нимĕç коменданчĕ йывăрçын хĕрарăмсене пурне те комендатурăна пыма хушнă. Чĕннине пула 27 йывăрçын хĕрарăм пынă. Гитлерла ирсĕрсем вĕсене пурне те нӳхрепе хăваласа кĕртнĕ те çав нӳхрепе вара гранатăсем пăрахнă.

* * *

Вишири радио (Франция) ĕнер Мускаври пурнăç çинчен пĕлтернĕ, çав пĕлтерӳре вăл çапла каланă: «Мускаври халăх кунне çын пуçне 80 грамм çăкăр илсе тăрать», тенĕ. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек суйса, гитлеровецсен Вишири помощникĕсем Берлина юрасшăн тăрăшаççĕ. Анчах вĕсем ку хутĕнче те лекрĕç. Çакă паллă: Мускавра пурăнакан çын çăкăр Берлинри пĕр çын, Римри пĕр çын тата Вишири пĕр çын пĕрле илсе тăнинчен ытларах илсе тăрать. Тата çакă та паллă: француз халăхĕ выççăхса пурăнать, мĕншĕн тесессĕн предательсем Францие çаратма нимĕç оккупанчĕсен аллине тытса панă.

Эпир хамăрăн задачăна чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр!

Хаклă юлташсем, Чăваш АССР-ĕнчи рабочисем, работницăсем, колхозниксем, колхозницăсем, совет интеллигенчĕсем!

Борейко юлташăн чаçĕнчи боецсем, командирсем, политработниксем тата комиссарсем сирĕн пата красноармеецла хĕрӳллĕ те боевой салам яраççĕ.

Гитлерла мерзавецсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте, фронтăн малти линийĕнче тăрса, эпир Чăвашсен Автономлă Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем хăйсене шеллемесĕр, геройла ĕçленине курса савăнатпăр. Асра тытăр, юлташсем, эсир заводра, фабрикăра, совхозра тата колхозра геройла ĕçленин кашни минути, кашни сехечĕ пирĕн аннен — тăван çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетет, Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне тĕреклетет тата нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕнтерес сехете çывхартать. Чăваш халăхĕ большевиксен партине, пирĕн аслă çулпуçа Сталин юлташа юратни тата парăнса ĕçлени пире, фронтовиксене, çĕнĕрен пысăк ĕçсем тума, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç кĕрешме хавхалантарать.

Пирĕн чаçăн боецĕсем, командирĕсем, политработникĕсем тата комиссарĕсем, фронтăн пирĕн патри участокĕнче вăхăтлăха пулнă «сывлăш савăрмалли» вăхăтпа усă курса, пулас татăклă çапăçусенче тăшмана хирĕç кĕрешме çĕнĕ вăйсем пухрĕç. Эпир мĕнпур вăя Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне большевикла пурнăçа кĕртес — çар техникине вĕренсе çитес тата хамăрăн пĕлӳсене ӳстерес ĕçе паратпăр.

Çар ĕçне тăрăшса вĕренсе пынипе пĕрлех, соединенин пĕтĕм составĕ вăрçăра паттăррăн кĕрешнĕ. Пирĕн пехотинецсемпе артиллеристсем, минометчиксемпе пулеметчиксем нимĕç захватчикĕсене кунĕн-çĕрĕн канăç памарĕç, вĕсен чĕрĕ вăйне, çар техникипе укрепленийĕсене пĕтерсе пычĕç. Çав вăхăтра снайперла тĕл персе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене çĕршер çынна пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем чугунçул кĕперне аркатса тăкнă, нимĕç захватчикĕсем хăйсен танкĕсемпе çав кĕпер урлă каçса пирĕн çине хĕссе кĕме шутланă пулнă.

Тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте совет воинĕсем çавтери çирĕп пулнипе кăмăлăхпа паттăрлăх кăтартрĕç тата халĕ те кăтартаççĕ. Темиçе кун каярах СССР Верховный Совечĕ паттăр та хастарлă красноармеецсене, командирсене, политработниксене мĕнпурĕ 26 çынна орденсемпе тата медальсемпе наградăларĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте юлашки кунсенче хăйсен паттăрлăхне кăтартнă вуншар воинсене награда пама тăратнă. Гитлерла мерзавецсене хирĕç пĕрмаях çапăçса, çапăçусем лăпланнă вăхăтра харпăрхăйне панă хĕçпăшала, çар техникине вĕренсе тата хамăрăн çар пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырса, пирĕн мухтавлă воинсем — пехотинецсемпе артиллеристсем, бронебойщиксемпе минометчиксем, саперсемпе связистсем гитлерла йыткăтĕвне, мăн çул çинчи бандитсене пĕтерсе тăкассишĕн, вĕсене пирĕн тăван çĕршывран, совет çĕрĕнчен хăваласа кăларассишĕн кĕрешме хатĕр тăраççĕ.

Хаклă юлташсем, эпир хамăрăн умри задачăна чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр тесе сире шантаратпăр.

Тăшмана аркатса тăкатпăрах. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать.

Часть командирĕ А. БОРЕЙКО,
Часть военкомĕ В. БАЛАШОВ,
Чаçăн политотделĕн начальникĕ Х. АКОПДЖАНЯН.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи икĕ уйăхри çапăçусен итогĕсем

(1942 çулти майăн 15-мĕшпе июлĕн 15-мĕш хушши)

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 15-мĕшне çитиччен пынă хаяр çапăçусем 1942 çулти кĕрешĕве палăртса тăракан çĕнĕ уйрăмлăха уçăмлăн кăтартса пачĕç. Çав уйрăмлăх вăл çакăнта пулса тăрать: тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çарăн организованноçĕпе çирĕплĕхĕ ӳснипе пула нимĕçсен çапăçăва ирĕксĕрех хăйсен çарĕсен тĕп вăйĕсемпе резервĕсене кĕртме лекрĕ, вĕсем халь ĕнтĕ малтанхинчен чылай вăрахăнрах (мал алла куçса пыраççĕ тата çав çапăçусенче çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен нимĕнпе те витме çук çавтери пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

Акă 1942 çулти майăн 15-мĕшпе июлĕн 15-мĕш хушшинче пулнă пирĕн тата нимĕçсен çухатăвĕсене кăтартса паракан даннăйсем.

Нимĕçсен фашистла войскисем, вилнисемпе аманнисене тата тыткăна лекнисене шутласан, 900.000 салтакпа офицертан кая мар çухатнă, вĕсенчен вилнисем 350.000 çынран кая мар. Кунсăр пуçне вĕсен тĕрлĕ калибрлă орудисем 2.000 орудие çити, 2.900 танка çити, 3.000 самолетран кая мар пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех Хĕрлĕ Çарăн, вилнисемпе аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене шутласан, 399.000 çын пĕтнĕ, пур тĕрлĕ калибрлă орудисем 1.905 оруди, 940 танк тата 1.354 самолет пĕтнĕ.

Çак даннăйсенчен ĕнтĕ нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем, вилнисемпе аманнисене тата тыткăна лекнисене шутласан, юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна пĕр миллион çынна яхăн пĕтни курăнать. Икĕ уйăх хушшинчи çапăçусен татăклă итогĕ çакă пулса тăрать те ĕнтĕ. Чăн та, пулса иртнĕ çапăçусенче совет войскисем хăшпĕр районсемпе хуласенчен тухса кайрĕç, анчах вĕсем гитлеровецсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк сиен кӳчĕç.

Опыт çакна кăтартса парать: Германи çарĕ мĕн чухлĕ ытларах çухатусем тӳсет, Германин информаци бюровĕ çавăн чухлĕ сĕмсĕррĕнрех суять, Берлин хапхи айĕнчен çавăн чухлĕ хытăрах çуйăхса вĕрни илтĕнет. Юлашки кунсенче гитлеровецсем жуликла ĕçсем тăвас тата суяс тĕлĕшпе хăйсенчен те иртсе кайрĕç.

Германи командованийĕ июлĕн 13-мĕшĕнче панă суя пĕлтерӳ çинчи чернил типсе çитме те ĕлкĕреймен-ха, Германин информаци бюровĕ Хĕрлĕ Çарăн икĕ уйăх хушшинчи çухатăвĕсем çинчен çĕнĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Унта тыткăна илнисем, танксемпе орудисене пĕтерсе тăкнисем çинчен калаçса этем ăсĕпе виçсе илме çук цифрăсем кăтартса панă. Нимĕçсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсем майăн 14-мĕшпе июлĕн 13-мĕш хушшинче совет салтакĕсене 706.000 çынна тыткăна илнĕ пулать, 3.900 танк тата 7.100 оруди тытса илнĕ тата пĕтерсе тăкнă пулать. Гитлеровецсен çакă ухмахсем валли шухăшласа кăларнă тăмсайла сӳпĕлтетĕвĕ Берлинăн пуриншĕн те паллă пулса тăракан халичченхи ухмахла пĕлтерĕвĕсене пурне те кая тăратса хăварать. Нимĕç войскисем çак вăрçă вăхăтĕнче тытса илнĕ тесе калакан трофейăсене Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх шутлас пулсан, Хĕрлĕ Çарăн тахçанах ĕнтĕ пĕр танк та, пĕр оруди те тăрса юлман кăна мар, çавăн пекех тата пĕр салтак та тăрса юлман пек пулса тухать.

Гитлерла жуликсем, фантазиллĕ даннăйсем пичетлесе кăлара-кăлара, тахçанах ĕнтĕ хăйсене пĕр хутчен мар кулăшла вырăна лартнă. Кайран вĕсен çакăн пек лару-тăруран пур майсемпе те çавăрăнса тухма лекнĕ. Анчах çав уроксем ахалех пулчĕç пулас. Гитлеровецсем Германи халăхне çĕнĕрен улталама тăрăшаççĕ, çапла майпа вара нимĕçсен фашистла çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче питĕ пысăк çухатусем тӳсни çинчен калакан тĕрĕслĕхе Германи халăхĕнчен пытарса хăварма хăтланаççĕ. Анчах тĕнчери обществăллă шухăш тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче гитлерла войскăсем тунă чăн-чăн çухатусене хăйсен тирĕ çинче тӳссе ирттернĕ Германи халăхĕ те халĕ ĕнтĕ, яланхи пекех, Гитлерăн кашни «ятарласа панă пĕлтерĕвне» — Суясса суй та, виçине пĕл!» текен халăх сăмахĕпе кĕтсе илет.

СОВИНФОРМБЮРО.

Лайăх ĕçлерĕмĕр, малашне тата лайăхрах ĕçлĕпĕр

Бенский юлташ директор пулса ĕçлекен заводăн коллективне Оборонăн Гасударственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне пани

Бенский юлташ директор пулса ĕçлекен заводăн коллективĕ июлĕн 17-мĕшĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн ялавне алла илме митинга пухăнчĕ.

Трибуна çинче Хĕрлĕ Çар чаçĕн представителĕсем, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн представителĕ Кузнецов юлташ, Халăх Комиссарĕн заместителĕ Новиков юлташ, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Матвеев, ВКП(б) Обкомĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ С. Крылов, ЦК ВКП(б) çумĕнчи партконтроль комиссийĕн уполномоченнăйĕ Серов юлташсем, заводри партипе профсоюз организацийĕсен представителĕсем, стахановецсемпе стахановкăсем пулчĕç.

Митинга заводри партбюро секретарĕ Поддубко юлташ уçрĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче завод коллективĕ май тата июнь уйăхĕсенче тунă çитĕнӳсем çинчен, завод икĕ Хĕрлĕ ялав — Оборонăн Государственый Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр промышленность халăх комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулни çинчен каларĕ.

Митинга уçнă хыççăн полковник Макаров юлташа сăмах параççĕ. Вăл, пирĕн умра историллĕ аслă задача—1942 çулта нимĕçсен фашистла çарĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас задача тăнине палăртса, Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçлассишĕн Хĕрлĕ Çар паттăррăн кĕрешни çинчен, Совет тылĕн хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса хатĕрлесе фронта нумайрах та нумайрах памалли çинчен калать.

Макаров юлташ хăйĕн сăмахне: — Сывă пултăр геройла Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр пирĕн аслă полководец Сталин юлташ! — тесе вĕçлет. Митинга пухăннă çынсем ура çине тăрса Сталин юлташа саламласа нумайччен алă çупаççĕ.

— Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх сире Оборонăн Государственный Комитечĕн ялавне паратăп,—тесе Макаров юлташ Хĕрлĕ ялава завод коллективĕн представителĕсене пама трибуна умне тухать. Хĕрлĕ ялава илнĕ чухне завод представителĕсем чĕркуçленсе пуçĕсене таяççĕ, завод директорĕ Бенский юлташ ялава чуп тăвать. Унтан вăл сăмах тухса калать.

—Заводри стахановецсемпе стахановкăсен, рабочисен, инженерсемпе техниксен ячĕпе эпĕ партие, правительствăна тата Хĕрлĕ Çара пирĕн коллектив малашне тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшĕ, тесе шантаратăп. Стахановецсемпе стахановкăсем, рабочисемпе инженерсем тата техниксем çĕршывăн оборонине тĕреклетме мĕнпур пĕлĕве парса ĕçлĕç, тесе эпĕ тупа тăватăп.

Совет Союзĕнче фронтпа тыл тачă çыхăнса тăни çинчен каласа, Бенский юлташ: совет çĕршывĕ пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ, çав лагерьте пирĕн коллектив хăйне тивĕçлĕ вырăна йышăнчĕ, тет. Завод коллективĕн тата лайăхрах ĕçлеме кирлине, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне заводра хăварассишĕн вăйлăн кĕрешмеллине кăтартса парать вăл.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн представителĕ Кузнецов юлташ завод коллективне çĕнĕ çĕнтерӳ тунă ятпа саламларĕ, умра тăракан пысăк задачăсем çинчен каласа пачĕ.

Халăх Комиссарĕн заместителĕ Новиков юлташ наркомат руководствинчен заводра ĕçлекенсене салам калать. Вăл завод ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртрĕ. Малашнехи ĕçре продукци пахалăхĕшĕн, завода пĕр тикĕс ĕçлеттерессишĕн тăрăшма кирлине, талăкри график çирĕп закон пулса тăмаллине, производствăри культурлăхшăн кĕрешме, вырăнти халăхран кадрсем хатĕрлеме кирлине кăтартса пачĕ. Çак заводăн Чăваш республикин промышленноçĕнче ертсе пыракан завод пулса тăмалла, терĕ вăл.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Правительстви ячĕпе ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Матвеев юлташ сăмах каларĕ.

Унтан цех начальникĕн заместителĕ Буйволов, стахановка Кац, старши конструктор Эдельштейн, завком председателĕ Блошенко юлташсем сăмах тухса каларĕç.

Митинг пĕр шухăшлă пулса аслă Сталин патне саламлă çыру яма йышăнчĕ. Çав çырура завод коллективĕ малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах парать.

Тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртер

Чкаловски районри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн ĕç планĕ

Мĕншур ĕçе фронт интересĕсене — 1942 çулта нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас задачăна пăхăнтарса, колхоз хăйĕн умне тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕрес, государствăна тырпул, пахча-çимĕç тата МТС-а натуропламна срокченех парса татас тĕллеве лартнă.

Уборка планне тунă чухне çавсене асра тытнă: кĕçал кĕрхи тырăсене пухса кĕртесси, кăçалхи валли çĕр хатĕрлесси тата кĕрхи тырăсене акасси пĕр вăхăтра тенĕ пекех килесçĕ. Çавăнпа ĕç вăйĕпе турттăм вăйне тата машинăсене ĕçре тĕрĕс, выçмаларса тухассине, вĕсемпе тĕплĕ усă курассине колхоз тĕп вырăна хучĕ. Пахăпа усăллен тумалли ĕçсен пысăкĕшĕпе нормине тата кашни колхозникĕн ĕç вырăнне палăртнă.

Колхоз паянхи куна 10 жнейка, çителĕклĕ таранах çурласем, кĕрепленлĕ çавасем юсаса хунă, çĕнĕрен тунă. Витнĕ итемсемпе ахаль итемсене, транспорт инвентарĕсемпе лаша кӳлмелли, сӳсмен-хăмăтсене, (вĕренсене хатĕрлесе хунă.

1. Ĕçĕн анлăшĕ, ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ тата машинăсем

Колхоз клевер тата утăлăх люцерна 140 гектар, вăрлăхлăх курăксем 42 гектар, пучахлă тĕштырăсем 1.098 гектар, пăрçа йышши тата кĕрпе культурисене 226 гектар пухса кĕртмелле, кĕрхи тырăсене 500 гектар çине акмалла, 100 гектар çĕре лущени туса хăвармалла.

Колхозăн уй ĕçĕн бригадисем 10. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вăйпитти колхозникĕсемпе колхозницăсем 499 çын, 5—7-мĕш классенче вĕренекен ачасем 83 çын тата подростоксем 60 çын — пурĕ 642 çын хутшăнмалла.

Колхозăн 86 ĕç лаши, 80 стан урапа, 80 рыдван, 10 жнейка, БДО-34 маркăллă молотилка, триер тата ытти кирлĕ машинăсем пур.

II. Тырăсене пухса кĕртесси

Тырăсем пиçсе çитнĕ май уйрăм участоксене суйласа вырма тытăнатпăр. Тĕштырăсене тата кĕрпелĕх акнă тырăсене пухса кĕртнĕ çĕрте пĕр комбайн, 10 жнейка ĕçлемелле. Комбайн патне ялашах ĕçлеме 26 çын, 7 лаша уйăрнă. Жнейкăсем çумне тырă пĕрчисене пуçтарса тыракан приспособленисем тунă, жнейкăсене икĕ сменăпа ĕçлеттерме тăватшар лаша уйăрса панă, машиноведсене çирĕплетнĕ.

Кĕлте çыхас тата турттарас ĕçсене вырнă кунах туса пымалла. Ĕç норми тăрăх кашни жнейка икĕ сменăпа ĕçлесе талăкра кĕрхи тырăсене 7-шер гектар, çурхи тырăсене пĕр смена хушшинче 6-шар гектар вырмалла. Çапла вара колхоз кулленех комбайнпа 10—12 гектар, жнейкăсемпе кĕрхи тырăсене 70 гектар, çурхи тырăсене 60 гектар вырса пуçтармалла. Кашни гектартан вăтам шутпа 1.500 кĕлте тухассине тата норма тăрăх пĕр гектар çинчи кĕлтесене виçĕ çын çыхса пымаллине шута илсе, кашни жнейка çумнех кĕрхи тырăсене вырнă вăхăтра ĕçлеме 21-шер çын, çурхи тырăсене вырнă вăхăтра ĕçлеме 18-шар çын уйăртăмăр.

Кунсăр пуçне çурласемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе тĕштырăсене тата пăрçа-ясмăк йышши тырăсене 282 гектар пухса кĕртмелле. Çапла вара колхоз кĕрхи тырăсене тата çурхи тырăсене вырас ĕçе 13 ĕçкунĕ хушшинче пĕтĕмĕшпех вĕçлемелле.

Уборка ĕçĕсене — утă çулассинчен тытăнса авăн çапса пĕтериччене — звеносемпе бригадăсем тăрăх туса пымалла. Çапнă тырра итем çинчех виçсе шута илсе тăратпăр. Пур ĕçе те ирхи шуçăмпа тухса тĕттĕм пуличчене ĕçлесе туса пыратпăр.

III. Авăн çапасси тата государствăна тырă парасси

Авăн çапма колхозра 13 итем хатĕрленĕ, вĕсенчен витнĕ итемсем 3. Итемсене тĕплĕн тасататпăр, итем çинчи иртнĕ çулхи çӳпçапсене сунтарса яратпăр, вара дезинфекцилетпĕр. Кун хыççăн çĕнĕрен хырса якатса хытаратпăр.

Уборкăн виççĕмĕш кунĕнче ыраш çапма, пиллĕкмĕш кунĕнче пăрçа çапма (аштарма) тытăнатпăр. Ырапа БДО-34 маркăллă тракторлă молотилкăпа çапатпăр. Ăна икĕ сменăпа ĕçлеттерсе, кулленех 13 гектар тыррине çапса пыратпăр. Пăрçана кашни бригада хăйĕн участокĕ çинче çапать. Бригадăсене пăрçа турттарма пĕрер лаша тата аштарма тăватшар тиха уйăрса панă.

Тырă вырнă вăхăтра кĕлтесене калапна хывмасăрах, лавсем çинчех илсе çапатпăр. Сумăрлă кунсенче авăн çапма витнĕ итемсем айне кĕлтесем валашне 2—3 кунлăх хатĕрлесе куратпăр. Тырă вырас ĕçĕн пуçламнă колхозниксене пурне те алăпа авăн çапма куçаратпăр. Вĕсем ку ĕçре вара авăна çапса пĕтериччене ĕçлеççĕ. Çапла май кулленех молотилкăпа 13-шер гектар, алăпа 30-шар гектар çинчи тырăсене çапса пырса, колхоз авăн çапас ĕçе сентябрĕн малтанхи вунă кунлăхĕнче вĕçлемелле.

Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене çапнипе пĕр вăхăтрах, вăрлăхлăх клевера шĕкĕлчесе тасатас ĕçсем те пулса иртмелле.

Уборкăна тухиччен колхоз иртнĕ çулти тырăран государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе 525 центнер тĕштырă парать. Государствăна çĕнĕ тырă парасси уборкăн 5-мĕш кунĕнче пуçланмалла. Ĕçĕн графикне çирĕппĕн пурнăçласа пырса, колхоз государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парас тата Хĕрлĕ Çар валли тĕштырăсен фондне тума тырă парас ĕçе, çавăн пекех МТС-а натуроплата тыррине парас ĕçе срокчен чылай маларах туса ирттерме палăртать.

IV. График, ĕç вăйне вырнаçтарса тухни

Колхоз тата пур бригадăсемпе звеносем те тырпулсене пухса кĕртме график тунă. Вĕсене колхозниксен аслă пухăвĕнче, бригадăсемпе звеносенче сӳтсе-явса йышăннă. Вĕсенче колхозăн ĕç нормисем тăрăх кашни ĕçе тума мĕн чухлĕ çын, туртăм вăйĕ тата машинăсем кирлине, кашни кун мĕн чухлĕ ĕç тумаллине тата вăл ĕçсене тумалли срокçене кăтартнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн уборкăри ĕçсен графикĕ

№ сем	Тумалли ĕçсем	Ĕçĕн пысăкĕшĕ (гектарпа)	Ĕç норми (гектарпа)	1—2-мĕш кунсем: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç	3—4-мĕш кунсем: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç	5—6-мĕш кунсем: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç	7-мĕш кун: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç
1	Кĕрхи тырăсене жнейкăсемпе вырасси	490	7	10	40	20	70	10	40	20	70	10	40	20	70	10	40	20	70
2	Кĕрхи тырăсене комбайнпа вырасси . . .	130	10–12	—	—	—	—	1	7	26	10	1	7	26	10	1	7	26	10
3	Çурхи тĕштырăсене жнейкăпа вырасси	360	6	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
4	Кĕлте çыхса йăтасси . . .	850	0,33	—	—	210	70	—	—	210	70	—	—	210	70	—	—	210	70
5	Çĕмел тăвасси	850	2,5	—	—	28	70	—	—	28	70	—	—	28	70	—	—	28	70
6	Кĕрхи тата çурхи тырăсене çурлапа вырасси	116	0,10	—	—	280	28	—	—	50	5	—	—	50	5	—	—	50	5
7	Пăрçана çавапа çуласси .	126	0,13	—	—	83	11	—	—	216	28	—	—	146	19	—	—	76	10
8	Пăрçана çапасси (лашапа) .	126	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	10/40*)	80	15	—	10/40	80	15
9	Викăна тата ясмăка çавапа çуласси . . .	40	0,33	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	70	23	—	—	50	17
10	Государствăна тырă парасси (икĕ кун çурăра пĕрре хутлаççĕ)	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	10	10	16/4	—	10	10	16/4
11	БДО молотилкăпа авăн çапасси икĕ сменăра, ...	—	13	—	—	—	—	1	19	72	13	1	19	72	13	1	19	72	13

№ сем	8-мĕш кун: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç	9—12-мĕш кунсем: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç	13-мĕш кун: Ĕçе хутшăнаççĕ: Машинăсем	Лашасем	Çынсем	Пĕр кун хушшинче тунă ĕç
1	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
2	1	7	26	12	1	7	26	12	1	7	26	10
3	10	20	20	60	10	20	20	60	10	20	20	60
4	—	—	180	60	—	—	180	60	—	—	180	60
5	—	—	25	60	—	—	25	60	—	—	25	60
6	—	—	150	15	пĕр	—	кун 200	та 20	—	—	—	—
7	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
8	—	10/40	80	15	—	10/40	80	15	—	10/40	80	15
9	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
10	—	30	30	48	—	30	30	48	—	30	30	48
11	1	19	72	13	1	19	72	13	1	19	72	13

*) Числителте—лашасене, знаменательте—тихасене кăтартнă.

Кĕрхи тырăсене акма, вăрлăхлăх клевера вырса, çапса пуçтарма та çакăн пек графиксем тунă. Колхозăн пурĕ кĕрхи тырăсене 500 гектар акса хăвармалла. Ку шутран 130 гектарне МТС вăйĕпе акмалла. Кĕрхи тырăсене акнă çĕре колхозăн 6 сеялки хутшăнать. Вĕсемпе кулленех 51-шер гектар акмалла (нормăпа пĕр сеялкăн кунне 8,5 гектар акмалла). Кĕрхине колхоз августăн 15—22-мĕш кунĕсем хушшинчи срокра туса ирттерме палăртнă. Акмалли çĕре июлĕн 25-мĕшĕнче хатĕрлеме тытăнатпăр. Пучахлă тата пăрçа йышши тырăсене пурне те августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пуçтарнă хыççăн, ĕçрен пушаннă лашасене пурне те кĕлте кӳме çĕре куçаратпăр, кĕлте турттарса пĕрес ĕç августăн 26-мĕшĕнчен пĕтĕлать.

V. Тырпула сыхласси тата пушара хирĕçле мероприятисем

Вăрçă обстановки революцилле сиеммĕлĕхе нумай хут ӳстерме хушать. Тырпулсене тата колхозăн общественлă пурлăхне çивĕччĕн сыхласа тăмалла. Тырăсене выльăхсем таптасран тата ăна çунтарса ярасран элемент халĕ те тимлĕн сыхласа тăратпăр. Хирти тырпула сыхлама 5 вышка тунă, хире тăтăшах пăхса çавăрăнма юланутпа 2 çын, тырă склачĕсемпе амбарсене сыхлама хуралçăсем уйăрнă. Итемсем çине насоссем, шыв чанĕсем тата хăйăр тултарнă ещĕксем лартатпăр, кĕреçесемпе пакурсем кирлĕ таранах илсе тухатпăр. Чĕлĕм туртма уйрăм вырăнсем тăватпăр. Пушартан сыхланас тесе итемсем йĕри-тавра 3 метр сарлакĕш çĕре чавса тухатпăр. Пушара хирĕç кĕрешекен дружинăна ертсе пыма тата пушара хирĕç мероприятисене туса пыма, Карсакова колхозницăна уйăрса лартнă.

VI. Агитациллĕ-массăллă ĕçсем тата социализмлă ăмăрту

Уборка вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ ĕçе партин колхозри пуçламĕш организацийĕн ĕç планĕ тăрăх туса пыратпăр. Колхозра «Большевик» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Уборка вăхăтĕнче кашни бригадăрах 2—3 кунта пĕрер боевой листок кăларасçĕ. Вĕсем пурте колхозниксен ĕçне сутатса тăраççĕ, ситменлĕхсене критиклеççĕ. Парторганизаци хирте ĕçлеме вулавçăсемпе калаçусем ирттерекенсене уйăрса çирĕплетнĕ.

Колхоз правленийĕпе партин пуçламĕш организацийĕ малта пыракан бригадăна пама куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав, стахановецсен ĕçне палăртма кисеп хăми тунă. Мĕншур ĕç социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе пулса иртет. Хальхи вăхăтра та бригадăсемпе звеносем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлесе пыраççĕ.

Пирĕн колхоз Киров ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Социализмлă ăмăртăвăн хăвачĕ çураки вăхăтĕнче колхоза пысăк çитĕнӳсем тума май пачĕ. Тырăсене пухса кĕртес ĕçре те вăл пире пысăк çĕкленӳ кӳрĕ.

Колхоз председателĕ

О. КАШТАНОВА.

Правлени членĕсем: И. МЕШКОВ, С. МАРТЫШКИН, П. АЛЕМАСОВ, Е. ГОРБУНОВА, П. ПЫРКОВ.

Колхозăн агротехникĕ

А. РУМЯНЦЕВ.

Агитколлективăн çуллахи ĕçĕсем

Çĕнĕ Пăвари (Елчĕк р.) агитколлективра 18 çын тăрать. Кашни эрнерех агитаторсем семинара е канашлăва пухăнса умра тăракан черетлĕ ĕçсем çинчен калаçса татăлаççĕ.

Юлашки вăхăтра колхозниксен пухăвĕсенче отечественнăй вăрçăн çулталăкри политикăллă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем çинчен, Совет Союзĕ Великобританипе договор, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕшӳ туни çинчен, пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнасси çинчен ăнлантарнă, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа кăтартнă.

Социализмла ăмăртса ĕçлесси çинчен ирттернĕ калаçусенче пĕтĕмпе 195 çын пулнă. Çавăнпа пĕрлех агитаторсем çуллахи вăхăтра колхозниксем умĕнче тăракан задачăсем çинче, çум çумласси тата ретсем хушшинче ĕçлесси, тырпула пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен кашни бригадăрах, кашни звенорах калаçусем ирттернĕ. Çум çумлама шкулта вĕренекен ачасене отрядсене пĕрлештернĕ. Кун хыççăн колхозра çум çумлас ĕç ăнăçлăн пулса иртрĕ.

В. М. Молотов юлташ СССР Верховный Совечĕн ларăвĕнче 1942 çулти июнĕн 18-мĕшĕнче тунă доклада ăнлантарса пама пухнă пухусенче 203 çын пулчĕ. М. И. Калинин юлташăн «Вăрçă çулталăкĕ» ятлă статьине вуласа панă çĕрте 185 çын пулнă. Агитаторсем час-часах колхозниксене хаçатсем çинчи статьясене вуласа параççĕ, радио тăрăх итленĕ хыпарсене каласа кăтартаççĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пырса, хăйсем ĕçре пример кăтартса пырса агитаторсем ытти колхозниксене производствăра тăрăшса ĕçлеме хавхалантарса пыраççĕ.

М. ЛАСТОЧКИНА,
Агитколлектив руководителĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе кашни кунах туса пыратпăр

СЕНТЕР, июлĕн 17-мĕш. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе июнь уйăхĕнче тытăнтăмăр.

Чи малтанах эпир ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен ялти комиссисен йышĕсене пăхса тухрăмăр, ялтан кайнисем вырăнне комиссисене çĕнĕ çынсем кĕртрĕмĕр, ăçта комиссисем пулман, унта комиссисем турăмăр.

Июнĕн 15-мĕшпе июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче ялти комиссисен председателĕсене 5 çĕрте пухса канашлусем ирттертĕмĕр. Унта ăшă тумтирсем пухас ĕçе мĕнле организацилесси çинчен калаçса татăлтăмăр.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç мĕнле пыни çинчен виçĕ ялсоветĕнчи комиссисен отчечĕсене районри комиссин ларăвĕнче итлерĕмĕр. Çав отчетсем тăрăх вара Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухасси çинчен массăсем хушшинче ăнлантарас ĕçе анлăрах туса пыма кирлине кăтартса патăмăр.

Çак ĕçсене туса ирттернĕ май, районра ăшă тумтирсем пухас ĕç вăйланчĕ. Халĕ ĕнтĕ предприятисенчи, учрежденисенчи, колхозсенчи комиссисем ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлеççĕ.

Июлĕн 16-мĕш тĕлне районра 377 сурăх тирĕ, 174 штука ытти тирсем, 540 метр киллти пир, 157 килограмм çăм, 30 мăшăр çăм алшиш тата ытти япаласем те пухнă.

И. ЕФРЕМОВ.
Ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен районри комиссин председателĕ.

Ют çĕршывсенче

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер каçхине Англин 200 яхăн истребителĕ Çурçĕр Францири 200 миля сарлакĕш фронтри объектсене тупăсемпе пулеметсенчен пенĕ, вăл шутра Дьеппа Этапль хушшинчи районра тăракан артиллери позицийĕсемпе Германи войскисене те пенĕ, çавăн пекех тата Шербургпа Булонь районĕсене те атакăланă.

Германин подводнăй лодкăсем тăвакан верфĕсен чи пысăк центрĕсенчен пĕрне—Вильгельмсхафена — разведка тăвакан самолетсем ӳкерсе илнĕ. Çав ӳкерчĕксем июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пăрахнă бомбăсем нумай япалана ишнине кăтартаççĕ. Подводнăй лодкăсем тăвакан çĕрти броньăллă темиçе плита çĕмĕрĕлнĕ. Ытти 5 строени çунса кайнă. Унта çичĕ суднăна хытă сиенленĕ.

Англи карапĕсем Ла-Манш проливĕнче тунă ăнăçлă ĕçсем

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтерет: ĕнер ирхине Англин хуралра çӳрекен çăмăл карапĕсем Ла-Маншра противникăн суднисен караванĕ çине пырса тăнăнă, вăл караванра пĕр танкер пулнă, ăна питĕ лайăх хĕçпăшалланнă икĕ тральщик тата сахалтан та 3 торпеднăй катер сыхласа пынă.

Икĕ тральщикне те хытă сиенленĕ, танкерне путарнă. Англи карапĕсем хăйсен базисене пĕр сухатусăрах тавăрăннă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине вăтаçĕрти секторта малалла куçнă импери войскисем темиçе çынна тыткăна илнĕ.

Противникăн кăнтăрла иртсен танксем пулăшнипе тунă контратакине сирсе пăрахнă.

Противникăн войскисене артиллерирен кун-каçах вăйлăн персе тăнă. Противникăн темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ.

Япони флочĕн Мидуэй утравĕ патĕнче пулнă çухатăвĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви июлĕн пуçламĕшĕнче Мидуэй утравĕ районĕнче Японипе Америкăн тинĕс-çар тата сывлăш-çар вăйĕсем хушшинче пулса иртнĕ çапăçун результачĕсене пичетлесе кăларнă.

Çав даннăйсем тăрăх, американецсем японецсен 4 авианосецне тата 2 йывăр крейсерне путарнă, 3 линкорне, 3 йывăр тата пĕр çăмăл крейсерне, 3 транспортне чылаях хытă сиенленĕ. Çапăçусенче Японин 275 самолетне пĕтерсе тăкнă. Японин 4.800 çын пĕтнĕ.

Американецсен пĕр эсминецĕ çеç путнă тата «Иорктаун» ятлă авианосецĕ сиенленнĕ. Вĕсен мĕн пурĕ 37 çын пĕтнĕ.

Чехословакири террор

ЖЕНЕВА, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Чехословакире гитлеровецсен террорĕ чех халăхне йышлăн вĕлерсе пырас ĕç пек пулса тăнă. Пĕр уйăх хушшинче 10.000 çынна ытла персе вĕлернĕ. Гестаповецсем Прагăра тата чехсен ытти хулисенче халăхсене çавăра-çавăра илсе ухтараççĕ. Вĕсем килсене ретренех ухтарса пыраççĕ. Вара кам патĕнче пăшал тупнă çавсене çеç мар, пĕр кунлăх хатĕрлесе хунă апат-çимĕç тупнисене те вырăнтах персе вĕлереççĕ.

Францире нацилле уявăисеплесе тунă демонстрацисем

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бастилие илнĕ кун — июлĕн 14-мĕшĕнче — Францин оккупациленмен пайĕнче: Вишире, Лионра, Ниццăра, Клермон-Ферранра, Тулузăра, Марсельре, Гренобльре тата Лиможра демонстрацисем пулса иртнĕ. Хăш çĕрте пожарниксем «Марсельеза» юрланă демонстрантсене пушар кранĕнчен шыв пĕрĕхтерсе сапаласа янă. Парижра нумай французсем «паллă мар салтакăн» вилтăпри патне кайса килнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПОЛЬШĂНА ИРĔКСĔРЛЕСЕ НИМĔÇЛЕТЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн Данцигри наместникĕ Форстер çапла каланă: «Кашни нимĕçĕн кунти халăх полякла ан калаçтăр тесе асăрхаса тăрас пулать», тенĕ. Сентябрьтен пуçласа полякла калаçма, çырма чараççĕ. «Кам нимĕçле калаçма вĕренсе çитмен, çавна ку çĕршывра вырăн çук,—тенĕ Форстер намăса пĕлмесĕр.—Вăрçă пĕтсен кунта Германирен хресченсемпе чиновниксем йышлăн килеççĕ. Ку район Германири ытти районсенчен нимĕнпе те уйăрăлса ан тăтăр тесе тăрăшас пулать»,—тенĕ.

Çамрăк гитлеровецсен пысăк ушкăнĕсем поляк ялĕсене каяççĕ, унта вĕсем поляк хресченĕсенчен тытса илнĕ килсен хуçисем пулса тăраççĕ. Люблин районĕнче «180 ял нимĕç ялĕсем пулса тăраççĕ» тесе пĕлтернĕ. Генерал-губернаторствăра 118 лагерь тунă, вĕсенче гитлеровецсем предприятисемпе ялхуçалăхĕнче поляк рабочийĕсен надсмотрщикĕсем пулма хатĕрленеççĕ.

Çĕршыва çавăн пек ирĕксĕрлесе нимĕçлетнине хирĕç оккупациленĕ Польшăра юлашки вăхăтра Германин полицейскийĕсене, чиновникĕсене тата салтакĕсемпе офицерĕсене час-часах вĕлере пуçларĕç. Гитлерла штурмовиксемпе поляк партизанĕсем хушшинче пулнă тытăçура, сăмахран, Германин Люблин районĕнчи полицин начальникĕ пулнă Ульрих Гуддара вĕлернĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче суднăсем мĕн чухлĕ тăваççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен суднăсем тумалли программине, каличчен программăсенчен пуринчен те пысăкрахскерне, план тăрăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Июнь уйăхĕнче çĕнĕрен 66 грузовой пароходпа танкер туса кăларнă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар суднисем тăвас ĕçе пăхса тăракан комиссин председателĕ Виттери генерал каланă тăрăх, пĕлтĕр тунă судоверфсемпе кăçал туса пĕтерекен судоверфсем çеç те 1943 çулта пĕтĕмпе сахалтан та 25 миллион тонна водоизмещениллĕх тĕрлĕ суднăсем туса кăлармалла пултараççĕ.

Хăшпĕр судоверфсем суднăсене питĕ кĕске срокра — 45 кун хушшинчех туса кăлараççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу ст. инспектор, бухгалтер-ревизор, статистик-экономист, машинистка, делопроизводитель, ротаторщик-экспедитор. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Набережная реки Волги, дом № 13, Уполнаркомзаг СССР по Чувашской АССР. Отдел кадров. 3—3

ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ В ЧЕБОКСАРАХ:

начальник планового отдела, опытный статистик, бухгалтер-ревизор.

В районы: ст. бухгалтер маслосырзаводов. Оплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. 2-я Герцена, 32, Трест маслопрома. 3—3

Чебоксарскому пивзаводу требуются рабочие: 1) сушильщицы по сушке сухарей, 2) разливальщицы, 3) солодовщицы.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары Ленинградская ул., 35, Пивзавод. 3—3

Требуется бухгалтер в Чебоксарскую детскую больницу с окладом 400 руб.

Продолжается прием заявлений от мужчин, желающих поступить в Чувашскую драматическую студию Московского государственного института театрального искусства.

Приемные испытания состоятся в гор. Чебоксарах (Дом печати, 2 этаж), 1—3 августа 1942 г.

Управление по делам искусств при СНК Чувашской АССР.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НАРКОМЗЕМА СССР

объявляет прием студентов на 1942—43 учебный год на первый курс агрономического и зоотехнического факультетов.

Институт готовит специалистов высшей квалификации по сельскому хозяйству—агрономов и зоотехников.

В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.

Заявления о приеме подаются на имя директора по адресу: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 34.

Учащиеся, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 г.г., и лица, демобилизованные из Красной Армии, принимаются в институт без испытаний.

Лица, поступающие в институт с испытаниями, держат таковые по русскому языку и литературе, физике и химии.

Заявления о поступлении в институт принимаются до 1-го сентября 1942 года.

С 1 августа при институте будут работать подготовительные курсы. Курсанты и студенты обеспечиваются общежитием и столовой.

ДИРЕКЦИЯ.

КАНАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ ШКОЛА МЕХАНИЗАЦИИ СЕЛЬСКОГО ХОЗЯЙСТВА НАРКОМЗЕМА ЧУВАШСКОЙ АССР

объявляет прием учащихся на курсы механиков МТС. Срок обучения 10 месяцев.

На курсы принимаются граждане не моложе 17 лет из невоеннообязанных, имеющие образование не ниже 9 классов средней школы и окончившие курсы или кружки по изучению трактора при средних школах и учреждениях.

Все зачисленные на курсы обеспечиваются стипендией в размере

Количество мест ограничено.

200 рублей в месяц и общежитием.

При школе имеется столовая.

Заявления о приеме направлять на имя директора школы по адресу: г. Канаш, школа механизации сельского хозяйства.

К заявлению прилагаются: автобиография, справки о рождении, об отношении к воинской обязанности, об образовании и об окончании курсов или кружка по изучению трактора.

Заявления о зачислении на курсы принимаются до 20 июля с. г.

Начало занятий 1 августа 1942 года.

Все зачисленные на курсы получают письменное извещение.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 559 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 58 84 п. п.